Кун-çула колхоз ĕçне халалланисем

# Венька пичче



*Раççей Федерацийĕн Президенчĕ В. Путин палăртнă наци проекчĕсем кĕçех çулталăк тултараççĕ. Унччен ял хуçалăхĕ çинчен патшалăх маннă текен вăхăт хыçа юлчĕ: паян çĕр ĕçĕнче, выльăх-чĕрлĕх пăхнă çĕрте ĕçлекен кашни çын – хăй çине патшалăх тимлĕх уйăрнăран – пĕлтерĕшлĕ ĕç вăйĕ пулса тăрать. Вĕсене пирĕн кашнине сума сумалла, туллин чысламалла. Çак çултан пăрăнас мар тесе паян эпĕ те хам сăмаха калас терĕм.*

*...Кирек епле хĕрӳ ĕçре те кану вăхăчĕ тупăннăран эпĕ те, хăнана çитнĕ май, шăпах çак вăхăта лекрĕм: Венька пичче пахчара ĕçлесе ĕшеннĕ хыççăн пӳрте чей ĕçме кĕнĕччĕ. Çĕр ĕçне аталантарассишĕн ирттернĕ кашни çул сăн-питре тарăн йĕр хăварнă пулин те, ĕçпе пиçĕхнĕ алăсем пур-пĕрех вăйне çухатман-ха: чей чашкине тытнă çĕрте те вĕсен çирĕплĕхĕ курăнать. Ялта, тăван хуçалăхра ĕçĕпе хисепе тивĕçнĕ Вениамин Иванович Авилов вара кăмăлĕпе те ялан вашават. "Уçă кăмăллă çынсем",- теççĕ ун пеккисем пирки халăхра. Акă, эпĕ алăк урати урлă каçса сывлăх суннă-сунман Венька пичче пушă чашăка чей ярса мана та сĕтел хушшине иртме чĕнни хăех çыннăн уçă кăмăллăхĕпе таравватлăхне çирĕплетрĕ. Сăмах çумне сăмах та – пирĕн вăрăм калаçу пуçланса кайрĕ.*

1940 çулхи июнĕн 7-мĕшĕнче (анне каланă тăрăх вăл эрне кун пулнă, терĕ Венька пичче) Тури Çатракассинче хресчен çемйинче çуралнăскер, тепĕр çултаăкран Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçланнă май шăпа пӳрнипе атте тесе курайман пин-пин ача йышне лекнĕ. Вăхăтра действительнăй çар службинче кавалерист пулнă ашшĕ Иван Авилович Авилов 1941 çулхи октябрьте фронта тухса кайнă хыççăн 1943 çулта ачисен пуласлăхĕшĕн, мирлĕ пурнăçшăн çĕршыва хӳтĕлесе пуçне хунă.

– Çемьере эпĕ пĕччен ача çеç пулнă пулин те, вăрçă çулĕсенчи выçлăхпа пиçсе ӳснĕ, атте тесе кураймаллине пăхмасăрах арçын ĕçĕн тутине ачаллах туйса илнĕ, аннепе пĕрле ĕçлесе хама ирĕке яман, пурнăç тума тăрăшса, çынна шанса ларман, аякран пулăшу кĕтмен,- аса илчĕ хăй пурнăçĕн пуçламăшне кĕçĕн мăнукĕ пуçламăш утăмсем тунине хĕпĕртесе пăхса Венька пичче. Унăн куçĕсенче çак вăхăтра тарăн шухăш палăрчĕ. "Пурнăç тытăмĕ",- теессĕм килчĕ манăн ăна. Ара, кашни çын çĕр çине хăй хыççăн йĕр хăварма килет. Ытларах чух – ырă йĕр! Çакă вăл чун ыйтнă ĕçе суйласа илни, ачасем çуратса тĕрĕс воспитани парса ӳстерсе пурнăç çулĕ çине кăларни, мăнуксен, май килсен прамăнуксен пуçламăш утăмĕсене курни. Тулли пурнăç, темелле çакна. Вениамин Иванович Авиловăн пурнăçне урăхла хаклаймăн та. Тăван "Свобода" пĕрлешӳллĕ хуçалăх кун-çулĕпе пĕр килнĕ пурнăç, тесен тĕрĕсрех те пулать пирĕн тĕслĕхре.

– Атте вăрçăра пуç хурсан, вуншар çул иртнĕ хыççăн тин хам çемье тĕрекĕ, унăн малашлăхĕ пулса юлнине ăнлантăм. Астăватăп, пĕррехинче Çĕньял Муркашра пурăнакан кукамай патне кайсан, выльăх пуçтаракан ялти склад патĕнче хам ĕмĕрте пĕрремĕш хут çăмăл автомашина куртăм. Хам шкула каймасттăмччĕха, анчах çавăн чухнех руль умне ларас шухăш çиçĕм хăвăртлăхĕпе пуçра йăва çавăрчĕ. Çакна хавхалантарма вăрçă чарăннă çулсенче тата малтанхи мирлĕ тапхăрта çĕршывра техника аталанма пуçланни чăнлăха килсе тухрĕ: аэроплан кĕрлевĕ çынсене çак техникăна курма урама хăвалатчĕ, унта-кунта курăнакан трактор-машина сăнавлă калаçăва йыхравлатчĕ, тĕлĕнтеретчĕ, ĕçлеме астаратчĕ,- аса илчĕ 60 çул каяллахине Венька пичче пурнăç аталанăвĕн страницисене вăскамасăр уçса. Çук, паянхи кун тӳпинчен ун чухнехи васкавсăр пек курăнать, çывăхарах пăхсан... пурнăç улшăнăвĕпе тан пыма ĕлкĕр кăна...

1947 çулта Венька Çатракассинчи вăтам шкула пĕрремĕш класа каять. Вĕренмелле, çын пулмалла, анчах пурнăç Авиловсене кунта та хăй пăрăнăçне кăтартать: ашшĕн шăллĕ Мирон çемье çавăрнă май аслăрах çемьен халăхăмăр йăлипе уйрăлса тухмалла. Кунта Çĕньял Хуракассинче амăшĕ тупнă мунча пек пӳрт çĕнĕ пурнăç никĕсĕ пулса тăрать. "Çак пӳрте пурăнма куçнине пăхмасăрах колхоза килекен "полуторкăсем" пĕрремĕш çăмăл автомашинăна курсан çуралнă ĕмĕте аталантарсах пычĕç. Эпĕ 6 класс вĕренсе пĕтернĕ тĕле колхозра пĕр ГАЗ-51 автомашина пулса. Хытă пăхнăрантăр, номерĕ паян та асра: 61-77 чо. Машини симĕсчĕ, номерĕ сарăччĕ. Унпа хĕл каçа лашапа йăлăмран Атăл урлă эпир каçарса хунă йывăç пĕренесене çăвĕпе колхоза турттаратчĕç. Вĕсене курса водителе вĕренес ĕмĕт çирĕпленнĕçемĕн çирĕпленсе пычĕ",- васкамасăр калаçать Вениамин Иванович мана куçран тинкерсе. Сăнатăп та, унăн куçĕсенче тарăн шухăш, пурнăç пуянлăхĕ, чăнлăх...

Малтуртăмлă тата хăй çемье тĕрекĕ пулса юлнине ăнланса илнĕ Венька пичче 16 çулта чух çу заводне кочегара ĕçе вырнаçать. Кĕлкăмрăкпа çулталăк кĕрешсен, пĕрремĕш хут курнă автомашина рулĕ турчăккана çĕнтерет: В. Авилов ДОСААФăн Çатракасси вăтам шкулĕ çумĕнчи филиалне водителе вĕренме кĕрет. "ДОСААФра хамăр укçа тӳлесе вĕрентĕмĕр. Кăнтăрлаччен шкулта – шкул ачисемччĕ, каçчен – эпир. Ятмантан, Шурчаран, Малиновкăран, Апашран т.ыт. çĕртен пурĕ 48 ача пулсаччĕ вĕренме кĕнĕ чух, анчах укçа тӳлеме вăхăт çитсен нумайăшĕ вĕренӳрен пăрахса кайрĕç. Эпир вара çак шкула 24ăн вĕренсе пĕтертĕмĕр, Шупашкара кайса экзамен тытрăмăр. Çĕньял Хуракассинчен пĕрремĕш водительсем шутĕнче мансăр пуçне Н. Петров, Н. Сергеев, Çатракассинчен Г. Жоржиков пулса",- тăсăлать ветеранăн аса илӳ çăмхи.

Ачаллах пуш параппан çапма хăнăхман В. Авилов салтак ячĕ тухнă тĕле алла специальность илме ĕлкĕрет. Çапла вара ят тухсан 3,5 çул Германири совет çарĕсен ушкăнĕнче водительте службăра тăрать. Пухнă опытпа, гражданкăна таврăнсан, тăван колхоз председателĕ А.Ф. Фадеев патне ĕç ыйтма пырсан, ăна хайхи пĕр юсавсăр автомашина пурри пирки пĕлтереççĕ. Водитель шухăшĕпе çеç пурăнакан çамрăк 34-27 чо номерлĕ ГАЗ-51 автомашинăна йышăнать, кĕске хушăрах юсаса ăна ĕçе юрăхлă тăвать. Çапла вара 1962 çул вĕçĕнче тытнă ĕçе Венька пичче 1998 çулччен те алăран вĕçертмест.

– Хĕрӳ ĕçре иртрĕ пурнăçăм. Çавăнпах унăн кашни кунĕ, уйăхĕ паян та асра. Иртнĕ ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсенче ял çынни строительство çине пысăк тимлĕх уйăрнăран тата вăл вăхăтра вутă çеç хутса пурăннăран йывăç пĕренесемпе вутă патне тăтăшах Атăл урлă рейса тухма тиветчĕ. Пĕррехинче уйăхра 26 хут Атăл урлă каçрăм. Ирпе 5 сехетре ялтан тухса каяттăмăр та çĕрле таврăнаттăмăр. Атăл урлă, кабинăна кĕмелле шыв пулсан та, хăра-хăрах ĕç тума каяттăмăр,- тет ĕçе яланах мала хунă В. Авилов.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсен пуçламăшĕнче, ветеран каласа панă тăрăх, "Свобода" хуçалăхра 11 автомашина (виçĕ ЗиС-5, икĕ ЗиС-150, пĕр УАЗ, пиллĕк ГАЗ-51) пулнă. Каярахри çулсенче ГАЗ-52, ЗиЛ-130 т. ыт. автомашинăсем колхоз автопаркне пуянлатнă. Вениамин Иванович Авилов ĕç пăрахнă тĕле хуçалăхри автомашинăсен паркĕ виçĕ хут ӳснĕ те 34 автомашинăна çитнĕ. Нумайăшне Венька пичче колхоза хăй хăваласа килнĕрен автопарк паян та уншăн пĕлтерĕшлĕ производство, тăтăшах интереслenet вăл унпа.

Хуçалăх аталанăвĕ тесе хăйĕн пурнăçне те хăй еккипе яман Венька пичче. 1963 çулта Çатракасси шкулĕнче пуçламăш классене вĕрентекен Тамара Ивановнăпа пĕр çемье çавăрать. Мăшăрĕ ĕмĕрĕпех ачасене шкулта вулама-çырма вĕрентни хăйне ĕçре хавхалантарнине пытармасть паян Вениамин Иванович. Пĕр-пĕрин хушшинче килĕшӳ пуррипе вĕсем Ростислав ывăлне таса сывă ӳстернĕ, ăна та техника юратăвне панă. Ĕçре тăрăшуллă пулнишĕн Вениамин Ивановичпа Тамара Ивановна паян – ĕç ветеранĕсем. Хастарскерсем ывăлĕпе, кинĕпе, 3 мăнукĕпе иртнĕ çул хăтлă кирпĕч çурт лартрĕç. Туслă çемье килти хушма хуçалăхпа туллин усă курма хăйсен аллипе лартса ӳстернĕ пуян сад тытать, пыл хурчĕсем ĕрчетет. Вĕлле хурчĕ вара ĕçчен çынна çеç килĕштерет. Çакнашкал пурнăç никĕсĕнче Вениамин Ивановичпа Тамара Ивановнан пĕрлехи тимлĕхĕпе тăрăшуллăхĕ, килĕшӳллĕхĕ пулни ыттисемшĕн те ырă тĕслĕх.

**Анатолий БЕЛОВ.**



"Свобода" хуçалăх водителĕ-механизаторĕсем Ильинкăри кану çуртĕнче (1973 çулхи июль. В. Авилов хыçалти ретре сулахайран иккĕмĕшĕ).



Ĕç ĕмĕрне ачасене хутла вĕрентес ĕçре ирттернĕ Тамара Ивановна черетлĕ урокра.

# Малтисемпе танлашăр

## Районти выльăх-чĕрлĕх пăхакансен ăмăртăвĕнче кăçалхи январь-июнь уйăхĕсенче мала тухнисем

### Ĕне сăвакансем

1. Çулталăк пуçланнăранпа кашни ĕнерен вăтамран сĕт суса илнĕ. 2. Çав шутра июнь уйăхĕнче (килогрампа).

| | | | |
|---|---|---|---|
| Кириллова Е. А. | "Свобода" | 2983 | 621 |
| Майорова М. И. | "Свобода" | 2969 | 608 |
| Петрова М. Г. | "Свобода" | 2916 | 552 |
| Арапкина Р. А. | "Свобода" | 2897 | 546 |
| Обжелянская Т. Н | ."Свобода" | 2826 | 533 |
| Яковлев Г. Я. | "Ударник" | 2702 | 436 |
| Яковлева Р. П. | "Ударник" | 2702 | 436 |
| Волкова З.В. | "Лидер" | 2646 | 408 |
| Сорокина Л. М. | "Герой" | 2606 | 533 |
| Андреев З. С. | "Ударник" | 2574 | 493 |
| Михайлов Н. И. | "Ударник" | 2573 | 540 |
| Михайлов Н. К. | "Ударник" | 2545 | 516 |
| Федорова Н.П. | "Свобода" | 2497 | 402 |
| Борисов Л.П. | "Герой" | 2495 | 491 |
| Васильева Г. Л. | "Ударник" | 2446 | 419 |
| Миронова И. М. | "Ударник" | 2429 | 497 |
| Леонтьева Г.В. | "Герой" | 2414 | 478 |
| Пичушкина М.И. | "Лидер" | 2365 | 597 |
| Трофимова В.Г. | "Ударник" | 2358 | 473 |

### Сысна пăхакансем

(çурасем илес енĕпе)
1. Пĕтĕмпе çура илнĕ. 2. Кашни тĕп амаран. 3. Тĕрĕслемеллисенчен.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Сергеева Л. | "Ударник" | 649 | 9,9 | 6,1 |
| Михайлов А. | Ильич яч. хис. | 494 | 9,1 | 6,5 |
| Федорова Г. | "Рассвет" | 489 | 10,1 | 9,7 |
| Клементьева П. | Ильич яч. хис. | 466 | 9,0 | 6,7 |
| Смирнова Л. | "Свобода" | 365 | 10,1 | – |
| Суриков Г. | "Свобода" | 319 | 8,6 | 8,7 |
| Тихомирова Е. | "Свобода" | 303 | 11,3 | 8,5 |
| Семенова В. | "Свобода" | 289 | 9,7 | 7,8 |
| Ишакова А. | "Свобода" | 287 | 10,4 | 7,8 |
| Ефремова Р. | "Свобода" | 282 | 10,5 | 12 |
| Барминова М. | "Свобода" | 282 | 9,8 | 10 |
| Алексеева О. | "Ударник" | 267 | 7,1 | 5,8 |
| Петрова Е. | "Ударник" | 267 | 6,9 | 4,9 |
| Захарова А. | "Ударник" | 216 | 7,0 | 7,8 |

### Сысна пăхакансем

(самăртас енĕпе)
1. Çулталăк пуçланнăранпа кашни сысна талăкра вăтамран ӳт хушнă. 2. Çав шутра июнь уйăхĕнче (грампа).

| | | | |
|---|---|---|---|
| Воронцова Л. | "Лидер" | 790 | 730 |
| Мясникова Р. | "Лидер" | 790 | 730 |
| Мешкова Ф. | "Лидер" | 790 | 730 |
| Морозова Л. | "Оринино" | 641 | 621 |
| Хорькова Г. | "Оринино" | 641 | 621 |
| Пискарев А. | "Герой" | 602 | – |
| Черкесов В. | "Герой" | 602 | – |
| Мастерова Н. | "Свобода" | 598 | 417 |
| Хлебкова В. | "Рассвет" | 550 | 895 |
| Александров А. | Суворов яч. хис. | 537 | 736 |
| Яковлева С. | Суворов яч. хис. | 537 | 736 |
| Васильева М. | Ильич яч. хис | 516 | – |
| Кузьмина А. | Ильич яч. хис. | 516 | – |
| Киселев В. | "Рассвет" | 513 | 500 |

### Ĕне выльăх пăхакансем

1. Çулталăк пуçланнăранпа кашни выльăх талăкра вăтамран ӳт хушнă. 2. Çав шутра июнь уйăхĕнче (грампа).

| | | | |
|---|---|---|---|
| Горшкова Р. | "Оринино" | 1185 | 1000 |
| Вершкова С. | "Оринино" | 1185 | 1000 |
| Данилов И. | "Оринино" | 1185 | 1000 |
| Федорова В. | Суворов яч. хис. | 1003 | 1247 |
| Ефимова З. | Суворов яч. хис. | 1003 | 1247 |
| Белов Г. | "Свобода" | 970 | 1280 |
| Кольцова Л. | "Свобода" | 970 | 1280 |
| Дедов В. | "Свобода" | 970 | 1280 |
| Матвеева Н. | "Свобода" | 970 | 1280 |
| Тихонов А. | "Ударник" | 782 | 961 |
| Васильева С. | Ильич яч. хис. | 770 | – |
| Семенов В. | Ильич яч. хис. | 724 | – |
| Петрова В. | Ильич яч.хис. | 724 | – |
| Степанова М. | "Герой" | 723 | – |

### Пăру пăхакансем

1. Çулталăк пуçланнăранпа кашни пăру талăкра вăтамран ӳт хушнă. 2. Çав шутра июнь уйăхĕнче (грампа).

| | | | |
|---|---|---|---|
| Любимова И. | "Герой" | 804 | – |
| Любимов Л. | "Герой" | 804 | – |
| Иванов В. | Ленин яч. хис. | 690 | 816 |
| Аврамова А. | Ильич яч. хис. | 633 | – |
| Клементьева Е. | Ильич яч. хис. | 633 | – |
| Васильева Т. | Ленин яч. хис. | 527 | 440 |
| Иванова Н. | Ленин яч. хис. | 527 | 440 |
| Егорова Е. | "Чемеево" | 527 | 403 |
| Федорова Г. | "Чемеево" | 527 | 403 |

### Сурăх пăхакансем

1. Кашни 100 сурăх пуçне путек илнĕ. 2. Кашни сурăхран вăтамран çăм каснă (килогрампа).

| | | | |
|---|---|---|---|
| Иванова С. | "Герой" | 67 | 4,7 |
| Соловьева Р. | "Герой" | 67 | 4,7 |